# В.Галошевӑн – ҫӗнӗ фильм

***Чӑваш наци библиотекин илемлӗ литературӑпа искусство пайӗнче «Чӑваш халӑхӗн мифӗсемпе легендисем» чӑваш юмахӗсен кунӗ иртнӗ.***

«Искусство, пултарулӑх тата илемлӗх тӗнчи» пултарулӑх тӗл пулӑвне режиссер-аниматора, Елчӗк районӗн пултаруллӑ ҫыннине, чӑваш ӳнерҫисен союзӗн, Раҫҫей Журналистсен союзӗн членне Владимир Галошева йыхравланӑ. Хӑна ҫамрӑксемпе чӑваш халӑхӗн мифологийӗн тӗнчи пирки калаҫу-лекци ирттернӗ.

Режиссер фильмӗсене электронлӑ презентаципе кӑтартнӑ. Тӗл пулӑва хутшӑннисем вӑл ӳкернӗ чӑваш, вырӑс анимаци фильмӗсене интересленсе курнӑ. Ентешӗн кинофильмӗсене чӑваш халӑхӗн тӗн культурине вӗреннӗ чухне шкулсенче, аслӑ вӗренӳ заведенийӗсенче тӑтӑшах усӑ кураҫҫӗ. Кинофильмсем ӳкернисӗр пуҫне Владимир Галошев «Чӑваш тӗнчи», «Ҫӑлтӑр ҫӳлти тӳпере», «Мир наших предков», «Батальон моей Родины» тата ытти кӗнекесен авторӗ те.

Владимир Петрович тӗл пулура хӑйӗн пултарулӑхӗпе, чӑваш халӑхӗн мифологийӗпе паллаштарнӑ, хӑй ӳкернӗ мультфильмсене кӑтартнӑ. Куракансем режиссерӑн ҫӗнӗ «Ҫӑлкуҫ/Родник» анимаци фильмне пӑхнӑ.

Шупашкарти 10-мӗш номерлӗ шкулта вӗренекенсем, апат-ҫимӗҫ тата коммерци технологийӗн студенчӗсем, вулакансем, режиссерӑн ентешӗсем, юлташӗсем ҫӗнӗ произведенипе кӑсӑкланса паллашнӑ. Автор мультфильмсем ӳкерес ӗҫри ҫӗнӗлӗхсем, вӑрттӑнлӑхсем пирки каласа панӑ.

**Вера АРХИПОВА.**